Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

10 (7755) № ✻ Шăмат кун, 2010 çулхи февралĕн (нарăс) 13-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Пултарулла яш-кĕрĕм

Пур ĕçре те маттур

Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Алина Александровна Димитриева Йӳçкассинчи тĕслĕх библиотекăра вăй хурать. Çамрăк специалист Чăваш патшалăх университетĕнче вĕренсе ăс пухнă. Хăйĕн ĕçне килĕштернине калать вăл, хаçат-журнал, кĕнеке вулама ача-пăча та, ватă çынсем çӳренипе те питĕ кăмăллă пулнине пĕлтерет.

Ĕçре хастар библиотекарь вырăнти çамрăксен канашĕн ертӳçи те. Ку яваплăхлă обществăлла ĕçе те Алина Александровна çулталăка яхăн ĕнтĕ аван пурнăçласа пырать. «Çамрăксем хăйсем тăрăшсан пурнăçра ырă улшăнусем пулмаллах», – тет тăрăшуллă специалист, çав вăхăтрах çамрăк амăшĕ те.

Н. НИКОЛАЕВА
сăн ӳкерчĕкĕ.

Ларуран

Республикăмăр уява хатĕрленет

Республика кунне уявлас кунччен – июнĕн 24-мĕшĕччен – вăхăт нумаях юлмасть. Çавна май ăна хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе ĕçлекен комитетăн кăçалхи пĕрремĕш ларăвĕнче Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров умри пĕлтерĕшлĕ задачăсем çинче чарăнса тăнă, уяв мероприятийĕсене çуллĕ шайра ирттерес тесен çакăншăн ответлă пулса тăракан кашни çыннăн ырми-канми тăрăшмаллине палăртнă.

Чăваш Республикин экономика аталанăвĕпе суту-илӳ министрĕ Иван Моторин «Раççей–2010-2020: кризис хыççăнхи управлени, тытăм улшăнăвĕсен аталанăвĕ» темăпа иртекен виççĕмĕш экономика форумне кĕтсе илме хатĕрленсе мĕнмĕн тунипе паллаштарнă.

Республика кунне халалласа тĕп хулара тата районсенче ирттерме палăртнă уяв мероприятийĕсем тата ытти çинчен ЧР культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕсен министрĕ Роза Лизакова тĕплĕн каласа панă.

Тĕп уяв, паллах, Шупашкарта иртет. Уяв хăнисене Патăрьел районĕ те хапăлласа кĕтет. Икĕ пуçлăх, икĕ Николай Иванович – Емельяновпа Глухов – хăйсем патĕнчи мероприятисен планĕсемпе паллаштарнă.

– Чăваш Енĕн нумай нациллĕ халăхне пĕрлештерекен, тăван çĕре çĕнетсе улăштаракан, ĕç илемне чыслакан уяв вăл – Республика кунĕ,– пĕтĕмлетнĕ йĕркелӳ комитечĕн ларăвне Николай Федоров Президент.

Ларура йĕркелӳ комитечĕ хушăмсем кĕртсе мероприятисен планне çирĕплетнĕ.

Район администрацийĕн кунĕнчен

Ыйтусене пĕрле татса парас пулать

Çулленех район администрацийĕн кунĕсене ятарлă графикпа килĕшӳллĕн вырăнсене тухса ирттересси йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Кăçал ку мероприяти Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчен пуçланчĕ. Февралĕн 9-мĕшĕнче район администрацийĕн, социаллă хӳтлĕх пайĕн, Пенси фончĕн, районти шалти ĕçсен пайĕн, пушар хуралĕн, районти ытти федераллă службăсен ответлă ĕçченĕсем ял тăрăхĕн территорийĕнчи пĕчĕк тата вăтам предпринимательство объекчĕсенче, суту-илӳ предприятийĕсенче, вĕрентӳ, сывлăха сыхлас ĕç, культура учрежденийĕсенче пулса курса ĕç коллективĕсемпе тĕл пулчĕç, вĕсенчи лару-тăрупа паллашрĕç, йĕркеллĕ мар çемьесене çитрĕç. Социаллă хӳтлĕх, пенси ыйтăвĕсемпе граждансене ял тăрăхĕн администрацийĕнче специалистсем йышăнчĕç. Кайран вара итогсене пĕрле пухăнса Шетмĕпуçĕнчи Культура çуртĕнче пĕтĕмлетрĕç.

Салатма – çур талăк...

«Салатма – çур талăк, пухма – çулталăк»,– тесе ахальтен каламан пулĕ çав ĕлĕкех ваттисем. Шетмĕпуç ял тăрăхĕн территорийĕнче пулнă май çак сăмахсен пĕлтерĕшне уйрăмах çивĕч туйса илетĕн. Кунти Мичурин яч. хис. хуçалăх унччен районта кăна мар, республика шайĕнче те чи ăнăçуллисенчен пĕриччĕ. Уйрăмах мăйракаллă шултра выльăх самăртассипе Шетмĕпуçсен ӳсĕмĕсем сумлăччĕ. Вĕсен ĕçĕпе паллашма тĕрлĕ çĕртен делегацисем сахал мар килсе çӳретчĕç. Выльăхчĕрлĕх продукчĕсем туса илессипе çыхăннă республика семинарĕсемпе канашлăвĕсене кунта тăтăшах ирттеретчĕç. Паян вара, вырăссем калашле, «ни кола, ни двора».

Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ В.К. Ананьев ертсе пыракан ушкăн çав кун унченхи пĕрлешӳллĕ хуçалăх вырăнĕнче халĕ пуç çĕклеме хăтланакан хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче пулчĕ. Тӳрех каламалла, лару-тăру çăмăл мар. Çитменнине кризис тени те кашни утăмрах ура хурать. Техника, топливо, удобрени тата ыттисен хакĕсем ӳссе пыраççĕ пулсан, ял хуçалăх продукцийĕн сутлăх хакĕ вара чакать.

Акă Опрыскъяль ялĕнчи Владимир Павлов хăйĕн Шупашкарти хваттерне сутсах фермер хуçалăхĕ йĕркелеме кунта таврăннă. Вăкăрсем самăртассипе ĕçлет. Халĕ 300–350 килограмм таякан вăкăрсем кунта 18 пуç. Вĕсене Игорь Илларионовпа унăн пенсие тухнă амăшĕ Клавдия Илларионова пăхса тăраççĕ. Курăк, тырă акса ӳстерме техника пур. Паллах, çителĕклех мар. Выльăхсене тытса усрамалли условисем те паянхи кун ыйтăвĕсене тивĕçтереççĕ тесе калаймăн.

Тивĕшри Михаил Лукоянов фермерăн та лару-тăру чаплах мар. Техника тенĕрен, парк туллиех вăл. Автомашинăсемпе комбайнĕ те, тракторĕсемпе ытти техники те. Анчах та 5–6 çул вĕсем вырăнтан та хускалманни куçкĕрет.

Çапах та пĕтĕмпех тĕксĕм сăрăпа сăрламалла мар иккен. Çакна Шетмĕпуçĕнчи Виталий Горбунов фермер хуçалăхĕнче пулнă хыççăн çирĕплетсех калама пулать. Унăн çийĕсене витнĕ тата урайĕсене бетон сарса хытарнă çуртсенче упранакан техникине илес пулсан, тепĕр пĕрлешӳллĕ хуçалăхра та вăл ун чухлĕ пулас çук. Акă «Беларусь» тракторсем иккĕ. Пĕрне нумай пулмасть туяннă, кредитне тепĕр 3 çул ытларахран тӳлесе татмаллине пĕлтерчĕ. КамАЗ автомашини те, ДТ тракторĕ те, комбайнĕ те, сеялкисемпе сажалкисем те, копалкисемпе тырă тасатса сăвăрмалли техники те, ытти кирлĕ техника те çителĕклĕ. Юр айĕнче ларакан техника пачах çук.

Тыр-пул, çĕр улми çитĕнтерет унччен пĕрлешӳллĕ хуçалăх ертӳçин çумĕнче ĕçленĕ В. Горбунов. Халĕ вара майракаллă шултра выльăх усрама тытăнасшăн. Çамрăк выльăх туяннă та ĕнтĕ. Ĕçре вара ăна мăшăрĕ, канмалли кунсенче хуларан килекен икĕ ывăлĕ пулăшаççĕ.

Чăвашсен йăли çапла вĕтха. Ял çыннисем хушшинче малтанхи вăхăтра ăна чалăшшăн пăхакансем те пулман мар. Халĕ ун пеккисем çукпа пĕрех. Çынсем хăйсем ĕç шыраса ун патне пыраççĕ. Кĕрхи ĕç çи вăхăтĕнче ун патĕнче ĕçлекенсен шучĕ 50 çынна та çитет. Ял çыннисенчен ытларахăшĕ вара ĕç шыраса урăх ăçта каяйтăр-ха?

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

Уява чĕнетпĕр

Çăварни Хĕле ăсатать, Çуркуннене кĕтсе илет

Ыран, февралĕн 14-мĕшĕнче, Муркашсемшĕн пысăк уяв иртет. Пĕтĕм Раççейри «Йĕлтĕр йĕрĕ – 2010» массăллă чупупа пĕрле Социализмла Ĕç Геройĕн Е.А. Андреев парнисене çĕнсе илессишĕн йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕ иртесси пирки маларах пĕлтернĕччĕ.

Вырсарни кун çавăн пекех эпир Çăварни уявне палăртатпăр. Çăварни – Хĕле ăсатни, Çуркуннене кĕтсе илни.

Çавна май пурне те районти стадиона Хĕле ăсатма, Çуркуннене кĕтсе илме чĕнетпĕр.

Пурне те уява 10 сехете йыхравлатпăр.

Хамăр инф.

Райадминистрацире

Хисеп грамотипе наградăланă

Нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн февралĕн 2-мĕшĕнчи 46 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

– **Владимир Славич АНДРЕЕВА**, Суворов яч. хис. хуçалăх председательне;

– **Валентина Петровна АЛЕКСЕЕВАНА**, «Птицефабрика «Моргаушская» уçă акционер обществин механизациленĕ фермăсен операторне;

– **Николай Васильевич БАРАНОВА**, «Птицефабрика «Моргаушская» уçă акционер обществин котельнăй операторне;

– **Геннадий Иванович ФРОЛОВА**, «Птицефабрика «Моргаушская» уçă акционер обществин котельнăй операторне;

– **Лариса Петровна ВАСИЛЬЕВАНА**, Çуткӳлти ялти библиотека библиотекарьне.

Саламлатпăр

Юратнă, хаклă, çепĕç чунлă аннене, тарават та ырă кăмăллă тăхлача, ылтăн-кĕмĕлрен те хаклă мăнаккана – Кĕртекасси ялĕнче пурăнакан **Анна Ильинична МИХАЙЛОВАНА** сумлă юбилей ячĕпе – 80 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, канлĕ ватлăх сунатпăр.

Саламлаканĕсем: ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем тата çывăх тăванĕсем.

Юратнă мăшăра, аннене, асаннене – Шаптак Муркаш ялĕнче пурăнакан **Валентина Федоровна РОМАНОВАНА** 55 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм ĕмĕр сунатпăр сана. Телейпе ăнăçу яланах юнашар çӳреччĕр, ĕмĕтӳсем çитсе пыччăр, çемйӳнте татулăхпа килĕшӳ хуçаланччăр. Кун-çулу телейлĕ пултăр, хуйхă-суйхă, инкек-синкек санран аякра тăччăр.

Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хуньамăшĕ, 2 ывăлĕпе кинĕ, 2 мăнукĕ, тăхлачи, Великановсен, Романовсен, Ивановсен çемйисем, тăванĕсемпе пĕлĕшĕсем.

Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Лазарь Михайлович МАКСИМОВА** 50 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, ĕçре ăнăçу, çемьере килĕшӳ, телей сунатпăр.

Саламлаканĕсем: ашшĕпе амăшĕ, мăшăрĕ, ывăлĕпе хĕрĕ, пиччĕшĕсемпе йăмăкĕсен, шăллĕн çемйисем, Кашмашри Майоровсем, Муркашри Алжировсем.

Хаклăран та хаклă юратнă çыннăмăра, кукаçие – Çĕньял Хуракассинче пурăнакан Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранне, **Петр Степанович СТЕПАНОВА** 87 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, канлĕ ватлăх, телей сунатпăр. Хăйĕн ĕмĕрĕнче тем те тӳссе чĕре витĕр кăларнă, халĕ вара мăнукусемпе кашни кунах савăнса тулли пурнăçпа пурăнмалла пултăр. Хуйхă-суйхă, инкек санран аякра тăтăр.

Саламлаканĕсем: хĕрĕ, мăнукĕсемпе кинĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем, тăванĕсем.

От всей души поздравляем с 45-летием дорогого, любимого сына, мужа, отца, брата, дядю, дедушку – **ГЕРАСИМОВА Ивана Алексеевича**.

Юбилей – это праздник не старости,
Пусть не чувствует сердце усталости.
Пусть будет жизнь всегда такой
Что годы шли, а вы их не считали,
Вовек не старились душой,
И никогда бы горько не вздыхали.
Желаем радости и счастья,
И в полном здравии, конечно,
До свадьбы правнуков дожить.

С поздравлением: мама, жена Валентина, сын, дочка с зятью, сестры, братья, племянники, внучка, друзья.

Хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă мăшăра, аннене, хунямана, асаннене, кукамая – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Зоя Алексеевна ДАНИЛОВАНА** çуралнă кунĕ ячĕпе саламлатпăр. Эсĕ пурри пирĕншĕн питĕ пысăк телей, яланах пире ăс парса пулăшса пыратăн, йывăрлăхсене çĕнтерсе малалла пурăнма вăй-хал парса тăратăн. Эпир яланах сан умра парăмра. Юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал сунатпăр. Тайма пуç сана пуриншĕн те.

Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕсем, хĕрĕпе кĕрӳшĕ тата мăнукĕсем.